**Уй-хир ман анне…**

Тăртаннă, тăрă, тарăн Атăл шывĕ
Çинче хĕвел çĕрри халь йăлкăшмасть.
Шуртанă халь илемлĕ кăвак ывăс,
Тĕп сакайнех вырнаçнă шур кăшман...

Анчах, çаплах эп халĕ хурланмастăп,
Анчах, çаплах эп халĕ сӳлкĕш мар.
Çăмăр çинчех çыран хĕрне ак антăм,
Çăмăр çинчех вĕрентĕм савăнма.

Çуратнă уй хуралнă, эп пĕлетĕп,
Ешернĕ çыр курас çук эс унта.
Анчах, ун вырăнне килти кĕлетĕн
Сар хĕрĕсем чăнах çăлтăрпа тан...

Çук, çук, уй-хир, эс маншăн пит илемлĕ,
Кĕркунне те эс маншăн — шӳлкеме.
Эп хам паян — ывăлу, ак вут чĕреллĕ,
Саншăн хатĕр халех çĕре кĕме...

Никам та мар, эс çеç мана ӳстернĕ,
Эс çеç мана йăпатнă юратса.

Эс çеç çемçе сăпка çинче сиктернĕ,

Эс çеç савса вĕрентрĕн юрлама.

Тăртаннă, тăрă, тарăн Атăл шывĕ

Çинче хĕвел çĕрри халь йăлкашмасть.

Анчах çаплах уй-хирĕн хура ывăлĕ

Хăй амăшне манма пултараймасть.

*Рзай, В. Уй-хир - ман анне : [сăвă] // Рзай, В. Çырнисен пуххи / В. Рзай. – Шупашкар, 2004. – С. 56-57.*